Иванов К. В. Икĕ хĕр ; Тимĕр тылă ; Тăлăх арăм : [сăвăллă юмахсем] / К.В. Иванов // Сказки и предания чуваш = Чăваш халлапĕсем. - Симбирск, 1908 (Тип. А. и М. Дмитриевых). - С. 3- 13.

## Икĕ хĕр.

Хăйĕн аслă хĕрĕнҫен
Ашшĕ ыйтат: мĕн мăнтăр?
—Пирĕн атте килĕнҫи
Кăвак лаша пит мăнтăр.
—Аслă каларăн, хĕрĕм.
Унтан ыйтат: мĕн тутлă?
—Пирĕн атте килĕнҫи
Вĕллери пыл пит тутлă.
—Аслă каларăн, хĕрĕм.
Татах ыйтат: мĕн çемçе?
—Пирĕн атте килĕнҫи
Тӳшек-минтер пит çемçе.
—Аслă каларăн хĕрĕм,
Хисеп турăн аçуна,
Ĕнтĕ сана çакăншăн
Çур мулăма паратăп.

* * *

Унтан кĕçĕн хĕрĕнҫен
Ашшĕ ыйтат: мĕн мăнтăр?
—Çут тĕнҫере çĕр мăнтăр,
Унтан мăнтăр нимĕн те çук.
—Санра пархатар сахал.
Унтан ыйтат: мĕн тутлă?
—Ыйхă тутлă, тĕнҫере
Унтан тутли нимĕн те çук.
—Санра пархатар сахал.
Татах ыйтат: мен çемçе?
—Алă çемçе, тĕнҫере
Унтан çемçи нимĕн те çук.
—Санра пархатар сахал,
Есĕ манăн хĕрĕм мар!
Ашшĕ вара ку хĕрне
Хăваласах йаҫĕ тет.

## Тимĕр тылă.

Тимĕр тылă тесенех,
Сехри хăпат инкесен.
Мĕншĕн-ши вăл? пĕлĕр-ха!
Акă мĕншĕн, калам-ха!
Пирĕн ҫăваш арăмĕ
Тимĕр тылла йуратмаст.
Пулсан пултăр йĕс тылă,
Йывăççи те наҫар мар.
Тимер тылă ашĕнҫе
Шурă шуйттан ларат тет.
Тимĕр тылла тытсанах,
Шăлĕсемпе шаккат тет.
Кантăр тыллас тесенех,
Çӳпне куçа кӳртет тет.
Çав çӳп куçра йулсассăн,
Çын тухатмăш пулат тет.
Çав тухатмăш хушнипе,
Тимĕр тылă çĕрĕпе
Урам тăрăх, хир тăрăх
Шалтăртатса çӳрет тет.
Тылă сиксе пынă ҫух,
Çулĕ çинҫе çын пулсан,
Ăна хĕссе вĕлерсе,
Йунне ĕçсе кайат тет....
Ĕнтĕ пĕлсе çитрĕр-и

Мĕншĕн пирĕн инкесен,
Тимĕр тылă тесенех.
Сехри хăпса тухнине?
Кам та пулин шанмасран,
Йе вăрçасран хăраса,
Пĕр ĕç çинҫен калам-ха
Хамăр йалта пулнине.

* *
*

Пирĕн йалта пĕр карҫăк
Пурăнаĭ-ҫĕ ĕлĕкрех.
(Хаҧ ĕнтĕ вăл тупăкрах
Выртаĭ масар хыçенҫе).
Пурăнăçа çав карҫăк
Çĕмĕрттерет-ҫе анҫах:
Пур-ҫе унăн к ҫака,
Ике сурăх, пĕр кушак,
Ҫалăш пўр ĕ тарри ҫе
Тăманасем у ра ҫе,
Тăманасем па н ҫех
Тимĕр ытли лараĭ-ҫĕ:
Пит х рушă йăпала
Пер кăтăрса айсассăн!
Ентĕ хăвăр та пĕлĕр
Карҫăк суккăр пулнине,
Мĕншĕн тесен карҫăкăн
Тимĕр тылли пур-ĕçке:
Кантăр шăмми çўпнине.
Куçа кўртет шура шуйттан!
Суккăр пулсан инçех мар
Тухатмăша тухма та.
Ку карҫăк та—ăçти çук
Тухатмăш-ҫĕ таврара.
Ăна пĕлмен çын та çук,
Палламан йыта та çук.

* *
*

Пур-ҫĕ тата карҫăкăн
Икĕ тăчăх кинĕсем:
Икĕ кин те, лайăх кин,
Иккĕшĕ те сарă кин.
Асла кинĕ мĕн йатли
Пир хале кирлех мар:
Хăйне кĕвĕлĕ арăм-ҫе,
Тўрринерех каласан,
Хитрех те мар мухтама,
Паҫар та мар хурлама.
Кĕçĕн кинин, каласан,
Йаҫĕ унăн Ҫĕкеç-ҫĕ,
Хăй те ҫĕкеç пекех-ҫĕ,
Ытарма çук аван-ҫĕ,
Алли çăмăл ĕç тума,
Тути çўхе ҫуп-тума.
Ҫĕкеç кинне карҫăкĕ
Темшĕн ытла йуратмасĭ,
Хăвăр тупăр мĕншĕнне,
Ана ҫĕлхем калаймасĭ.
Куçĕ-пуçĕ пит йăваш,
Çын савăнса тăмалла,—
Çапах карҫăк йуратмасĭ,
Ухмах тесех шухăшлăн.

* *
*

Çакă кинĕ йаланах
Минкĕретет карҫăка:
Апай, йар-ха хăнана,
Апай, йар-ха хăнана!
—Пуç çавармăш, çĕр-çăтман,
Çитĕ çынна йўтетме!
Авантарах ĕçне ту,

Вăхăт çитсен йарăп-ха.
Ҫĕкеç кинĕ ахаљ те
Ĕçне тăваť çунтарса,
Карҫăк çапах Ҫĕкеçне
Вăрçаť ĕçне туманшăн!
Суккăр карҫăк-кăрҫакăн
Куç курманни ахаљ мар!
Вăхăт çитсен, хăй вилсен,
Йарĕ-ха вăл хăнана.
Виçĕ кунҫҫен Ҫĕкеç кин
Ват карҫăка йўтетрĕ:
Апай, йар-ха хăнана,
Аппам патне кайам-ха!
—Ай çĕр-çăтманă пуçна!
Ырра мартăр ку кинĕм.
Виççĕмĕш кун каç пулсан,
Карҫăк ытлах çиленҫĕ.—
Апай, йар-ха хăнана,
Апай, йар-ха хăнана!
—Кайах, кайах, йўтетмĕш,
Курăн-ĕçке ху кунна.
Кеçĕрех кай, кĕçĕрех,
Пуçу кунта ан пултăр!
Кин васкаса çавăнтах
Сĕтпе йурҫĕ виç йусман:
Хăвăр пĕлетĕр: йусман,
Ырăсене асăнса
Вĕрсе-сурса пĕçерсен,
Пит хăватлă йапала.
Пирĕн йалта йаланах
Инçе çула кайнă ҫух,
Усал-тĕсел тивесрен
Йусман ҫиксе кайаççĕ.
Çапла пирĕн инке те
Хăй лашине кўлҫĕ те,
Тухса кайрĕ сĕм-çĕрле
Акăр йалне хăнана.

***

Тимĕр тылă шалтлатаť,
Усаĺ карҫăк сўс тыллаť.
Йĕс тăпсалă хапхана
Уçаť ҫĕлхе каласа:
Шалт-шалт тыллăм, шалт
тыллăм!
Акăр çулĕпе сик тыллăм,
Çав кин патне çит тыллăм,
Çав кин пуçне çи тыллăм!
Тимĕр тылă шалт тылă
Сиксе кайрĕ çулпала.
Тылла сиссе сарă кин
Йурă йурлаť, ҫуптараť:
Уйăх çути çап-çутă,
Акăр çулĕ тап-такăр,
Ҫуп-ҫуп лашам, ҫуп лашам,
Çитес çĕре çит лашам,
Хăрат, хăрат тăшмана,
Сĕтпе йурнă йусманăм!
Пăрахаť те хăвараť
Пĕр йусманне çул çине.
Çитнĕ çитнĕ çĕртенех,
Йусман тĕлне çитсенех,
Тимĕр тылă хăраса,
Сиксе кайрĕ килнелле.—
Шалт-шалт тыллăм, шалт
тыллăм!
Акăр çулĕпе сик тыллăм,
Çав кин патне çит тыллăм,
Çав кин пуçне çи тыллăм!

Тимӗр тылӑ шалт тылӑ
Сиксе пырать ҫулпала.
Тылла сиссе сарӑ кин
Татах йурлать йуррине:
Уйӑх ҫути ҫап-ҫутӑ,
Акӑр ҫулӗ тап-такӑр,
Ђуп-ђуп лашам, ђуп лашам,
Ҫитес ҫӗре ҫит лашам,
Хӑрат, хӑрат тӑшмана,
Сӗтпе йурнӑ йусманӑм!
Пӑрахать те, хӑварать
Тепӗр йусман ҫул ҫине.
Ҫитнӗ ҫитнӗ ҫӗртенех,
Йусман тӗлне ҫитсенех,
Тимӗр тылӑ хӑраса,
Сиксе кайрӗ кайалла.—
Шалт-шалт тыллӑм, шалт тыллӑм!
Акӑр ҫулӗпе сик тыллӑм,
Ҫав кин патне ҫит тыллӑм,
Ҫав кин пуҫне ҫи тыллӑм!
Тимӗр тылӑ, шалт тылӑ
Сиксе килет ҫулпала.
Тылла сиссе сарӑ кин
Йӗрсе йурлать йуррине:
Акӑр ҫулӗ тап-такӑр,
Уйӑх ҫути ҫап-ҫутӑ,
Ђуп-ђуп лашам, ђуп лашам,
Ҫитес ҫӗре ҫит лашам,
Хӑрат, хӑрат тӑшмана,
Сӗтпе йурнӑ йусманӑм!
Пӑрахать те хӑварать
Хайӗн йулашки йусманне.
Ҫитнӗ ҫитнӗ ҫӗртенех,
Йусман тӗлне ҫитсенех,
Тимӗр тылӑ кайалла
Сиксе кайрӗ йалалла...

* *
*

Ҫитес ҫӗре ҫитрӗ кин,
Шаккать аппӑшин хапхине:
Аппам, кӳрт-ха йӑмӑкна,
Кӳрт-ха Ђекеҫ йӑмӑкна,
Усал тӑшман хӑвалать!
Ҫӗрле ҫӳрес хӑнам ҫук,
Утах хӑвӑн ҫулупа!
—Сыв пул еппин аппамҫӑм!
Ђӗкеҫ кайрӗ шаккарӗ
Тепӗр аппӑшин хапхине:
Аппам, кӳрт-ха йӑмӑкна,
Кӳрт-ха Ђӗкеҫ йӑмӑкна,
Усал тӑшман хӑвалать!
—Ҫӗрле ҫӳрес хӑнам ҫук,
Кайах хӑвӑн ҫулупа!
—Сыв пул еппин аппамҫӑм!
Ђекеҫ кайрӗ шаккарӗ
Хайӗн пиђђӗшин хапхине:
Пиђђем, кӳрт-ха йӑмӑкна,
Кӳрт-ха Ђӗкеҫ йӑмӑкна,
Усал тӑшман хӑвалать!
—Ҫӗрле ҫӳрес хӑнам ҫук,
Уттар хӑвӑн ҫулупа!
—Сыв пул еппин пиђђеҫӗм!
Йӗре йӗре сарӑ кин
Аслӑк ҫине улӑхрӗ,
Йӗре йӗре ҫавӑнта
Улӑм ӑшне пытанђӗ.

* *
*

Шалт-шалт тыллӑм, шалт

тыллăм!
Акăр çулĕпе сик тыллăм,
Çав кин патне çит тыллăм,
Çав кин пуçне çи тыллăм!
Тимĕр тылă, шалт тылă
Сиксе ырат̆ çулпала.
Шалт-шалт сикет, шалт
тăват̆,
Сарă кин ţунне витерет...
* *
*
Карţăк хапхи умĕнţе
Кĕтет кĕтет тыллине—
Çук, кăтăрнă пулмалла:
Тылли халĕ те таврăнмаст̆.
Таçта таçта айакра
Шалт-шалт туви илтĕнет.
Аптăраса тухатмăш
Тылла ţĕнме тытăнат̆:
Шалт-шалт тыллăм, шалт
тыллăм!
Ман патмалла сик тыллăм,
Ман патăма кил тыллăм,
Маţţа çине вырт тыллăм!
Таçта таçта айакра
Аçтаха пек шăхăрат̆,
Ахăр тылă кăтăрнă:
Темĕскерпе çапăçат̆.—
Шалт-шалт тыллăм, шалт
тыллăм!
Ман патмалла сик тыллăм,
Ман патăма кил тыллăм,
Маţţа çине вырт тыллăм!
Таçта таçта айакра
Шăтăр-шатăр илтĕнет,
Ахăр тылă кăтăрнă:
Темĕн унта çĕмĕрет.—
Шалт-шалт тыллăм, шалт
тыллăм!
Ман патмалла сик тыллăм'
Ман патăма кил тыллăм,
Маţţа çине вырт тыллăм!
Таçта таçта айакра
Шăтăл-шатăл илтĕнет,
Ахăр тылă кăтăрнă:
Çĕр çĕмĕрсе таврăнат̆...
Шалт-шалт турĕ, шалт турĕ,
Карţăк пуçĕ йалт турĕ.
Суккăрскер çул çинţен
Ёлкĕреймерĕ пăрăнса.
Тылă пыţĕ, шалтлатрĕ,
Карţăк пуçне татайрĕ.
Тухатмăшăн пырĕнţен
Йухрĕ тухрĕ хура йун...
* *
*
Иртрĕ кайрĕ тĕттĕм çĕр,
Хуллен хуллен сирĕлţĕ.
Сикрĕ тухрĕ çутă кун,
Çут çанталăк çуталţĕ.
Акăр йалĕ вăраннă,
Йывăр ыйхă таталнă.
Пур те тăват̆ хăй ĕçне
Ĕçţен ţаваш йĕркипе:
Ţĕкеç инкен питţĕшĕ
Авă выţăх апатлат̆—
Хăй йăмăкин виллине
Тупат̆ улăм ăшĕнţе,
Авă пырат̆ пĕр егем,
Арман хуçи урампа.

Шурă сухалĕ ик хăлаç,
Курпунĕ те икĕ пăт.
Туйи çине тайаннă,
Хăй кăвакал пек утат̆,
Пысăк лавка умĕнҫе
Хашăлтатса ҫаранат̆,
Хăй çанăхла тумтирне
Çапкаласа мăрлатат̆:
Хурлăх, хурлăх, Михаљ тус!
Ман арманăм çук ĕнтĕ!
Кĕçĕр усал-тĕселсем
Шыв урапи хушшине
Çакланнă та, тыгăнҫĕç
Урапана çилĕпе
Çухăрттарса çавăрса,
Арман ҫулне шăхăртма.
Епĕ ҫупса тухиҫҫен
Арманăма усалсем
Лăштăр-лаштăр ишнĕ те
Тара панă таçталла!

* * *

Пирĕн йалта ҫавашсем
Тухнă тăнă урама,
Ушкăнепе кĕрлеççĕ
Вилнĕ карҫăк тĕлĕнҫе.
Карҫăк выртат̆, хускалмаст̆,
Таврашĕнҫе хура йун.
Пĕвĕ выртат̆ пĕр çерте,
Пуçĕ выртат̆ пĕр йенҫе.
Тылă ларат̆, шалтлатмаст̆,
Маҫҫа çинҫе сасă çук...
Халăх шав-шавĕ пĕр вĕçлĕ,
Шав-шав сăмахĕ çĕр тĕслĕ.

## Тăлăх арăм.

Йумах йупа тăрринҫе,
Хам урхамах çийĕнҫе.
Вĕçсе вĕçсе пытăм та,
Килтĕм тухрăм çакăнта
Аслă вăрçă хушшине.
Икĕ халăх вăрçнă çĕре.
Унта пĕр кун пурăнтăм.
Çак еççене епĕ куртăм:
Асап курат̆ çиҫĕ йутра
Çиҫĕ тăван вăрçăра.
Хам та ҫăваш пуçăмпа
Ҫасах сисрĕм ҫунăмпа
Вĕсем ҫăваш иккенне.
Ырă сунтăм вĕсене:
Ырă ҫăваш тăвансем,
Пĕҫҫĕр сирĕн тăшмансем!
Çут хĕвелпе çут тĕнҫе
Вай паҫҫăр çак кунсенҫе!
Çиҫĕ тăван çапăçат̆,
Çапăçат̆ те, тытăçат̆.
Сăсар çĕлĕк пуçĕнҫе,
Шурă тумтир пĕвĕнҫе,
Симĕс тукмак аллинҫе,
Сенкер сăнă хыçĕнҫе.
Вĕçет кăвак урхамах
Кайăкран та хытăрах.
Вĕçет, çӳрет тăлхăрса
Тăшман пуçне таптаса.
Вăрçă шавĕ шав кĕрлет,
Таврашри çĕр кисренет.
Çиҫĕ тăван çапăçат̆,
Çапăçат̆ те, туй тăват̆;
Тăшман пуçĕ çĕмĕрлет,

Хура йунĕ сирпĕнет.

* * *

Çавна курса тăнипе,
Хам та хытă пăхнипе,
Сехри хăпса тухнипе
Урхамахăм сикрĕ те,
Илтĕ кайрĕ туласа,
Пĕр йенелле çавăрса.
Ырса çитсен тăтăмăр,
Унтан çакна куртăмăр:
Çеçен хирте çил выҫат,
Сарă ыраш хумханат.
Сарă ыраш хумханат,
Ҫăваш ҫунне йăпатат.
Ирех тăрса пит çуса,
Ирех хырăм тăрантса,
Йертсе килет хуҫамăш
Çиҫĕ кинне тырă вырма.
Çиҫĕ тăван йут çĕрте,
Арăмĕсем çак хирте.
Тырă выраççĕ йурласа,
Ыраш ўкет касăлса,
Пулат-тăрат кĕлтесем,
Кăтра пуçлă çĕмелсем.
Тырă выраççĕ йурласа,
Пĕлмеççĕ те канасса.
Темĕншĕн вата карҫăкăн
Ăшĕ çунат пайав унăн.
Тырă выраççĕ йурласа,
Пĕтрĕ карҫăк ывăнса.
Ытла ăшĕ çуннипе
Утрĕ урапи патнелле,
Çиҫĕ кашăк ывăтрĕ,
Çапла сăмах каларĕ:
Пўлĕх, кăтарт тĕрĕсне,
Кашăк, кала ҫăннине:
Хăш кин йунлă кашăклă—
Пĕтнĕ унăн упăшки.
Кашăк ўкрĕ çаврăнса,
Ўкрĕ-тăҫĕ йун тулса
Кĕçĕн кинин кашăкки,—
Пĕтнĕ иккен упăшки!

* * *

Çеçен хирпе кин пырат,
Вăрçа йенелле утат,—
Кашăк йувпа тулайрĕ,
Ҫăн тĕрĕсне кăтартрĕ.
Йĕре йĕре кин пырат,
Аслă пиҫҫĕшне курат:
—Пиҫҫем пиҫҫем, шăллунне
Курмарăн-ши виллине?
—Куртăм-ĕçке курасса:
Ларат çўлĕ ту курăнса,
Çўлĕ ту çинҫе пўрт ларат,
Унта шăллăм çывăрат.
Тимер кăвак лаши-ҫĕ,
Лаши тирĕ айĕнҫе,.
Шурă тутăр пит çинҫе.
Симĕс тукмак аллинҫе.—
Йĕре йĕре кин кайат,
Тепĕр пиҫҫĕшне курат:
—Пиҫҫем, пиҫҫем, шăллунне
Курмарăн ши виллине?
—Куртам-ĕçке курасса:
Ларат çўлĕ ту курăнса,
Çўлĕ ту çинҫе пўрт ларат,
Пўртре шăллăм çывăрат.
Тимĕр-кăвак лаши-ҫĕ,

Лаши тирӗ айӗнҫе,
Йӗнерӗ пуҫӗ айӗнҫе,
Санни ури вӗҫӗнҫе.—
Йӗре йӗре кин утать,
Виҫҫӗмӗшне тӗл пулать:
—Пиҫҫем, пиҫҫем, шӑллунне
Курмарӑн-ши виллине?
—Куртӑм-ӗҫке курасса:
Ларать ҫӳлӗ ту курӑнса,
Ҫӳлӗ ту ҫинҫе пӳрт ларать,
Пӳртре шӑллӑм сывӑрать.
Тимӗр-кӑвак лаши-тӗ,
Лаши тирӗ айӗнҫе,
Шурӑ тутӑр пиг ҫинҫе,
Тӗттӗм касӗ куҫ ҫинҫе.

***

Йӗре, йӗре пырать кин,
Ҫӳле тӑва курҫе тин.
Курҫӗ мӗскӗн курасса,
Ларать ҫӳлӗ ту курӑнса,
Тӗтре ҫӳрет шуралса,
Ҫӳлӗ ту тавра йавӑнса.
Ылттӑн хӗвел савӑнмасть,
Ҫутӑ куна ҫутатмасть:
Пӗлӗт айне пытанать,
Хӑй ҫуттинҫен вӑтанать.
Ҫил тухать те, ҫил кайать,
Хурлӑхла йурӑ йурлать.
Ҫӳлӗ тӑван тӗлӗпе
Ҫӑхан карать ҫӑварне
Хӑйӗн ҫивҫӗ сӑмсипе,
Апат пурне сиснипе.
Ту тӑрринҫе пӳрт ларать,
Ҫӑваш хытӑ сывӑрать.
Кун килет те, кун иртет,—
Ҫӑваш хытӑ сывӑрать.
Шӑппӑн выртать, хускалмасть,
Ун арӑмӗ хурланать.
Йӗре йӗре хуйхӑрать,
Упӑшкине ыталать,
Авҫах арӑмӗ йӗвинӗ
Вӑл сисес ҫук ҫӗрипе.
Емӗр ӗмер йӗрсен те,
Ҫӗрӗлес ҫук куҫҫулӗпе.
Вара тӑваттӑмӗш кун
Ҫакӑнҫӗ те, пӗтрӗ ҫун,
Хӑй упӑшкин ҫӳҫӗпе,
Васӗ ылттӑн пӗрҫипе.
Епӗ те вара хурланса,
Икӗ ҫуна асӑнса,
Урхамаха вырттартӑм,
Ҫӳклерӗм те, хӑвартӑм.

## Ӑслӑ суйеҫҫӗ.

Пурӑннӑ икӗ тӑван:
Шӑллӗпеле пиҫҫешӗ;
Пӗр кӑмӑллӑ аҫаран
Пулнӑ вӗсем иккешӗ.
Шухӑшлама тапратсан,
Таҫта пырса ҫапӑннӑ,
Ҫӑмӑл ӑсич халлапра
Темӗн те тума пултарнӑ.
Шухӑш тытнӑ тӑвансем
Йӗри-тавра ҫап сарма,
Ҫавӑнпа пирӗн ӑслӑсем
Тухса кайнӑ вӑрмана.
Хусамӑр та пӗлетӗр,
Сӗм вӑрманта мӗскер пур:
Хусамӑр та курнӑтӑр—